**Çырлара**

Кунтăк турăм хурăн хуппинчен
– Çырлана каятпăр, çырлана!
Вырăнне çитмешкĕн-ха инçе,
Шыв ĕçме анатпăр çырмана.
Кунтăкпа ăсса ĕçсессĕн, çăл
Хурăн шывĕ евĕр тутланать;
Уçăлать сип-симĕс пурçăн çул
– Çырлана утатпăр, çырлана!
Тăрăшсах автать чăпар куккук,
Тантăшсем итлесшĕн мар ăна.
Тантăшсем пуласшăн мар салху
– Çырлана васкаççĕ, çырлана!
Ак уçланкă. Хĕп-хĕрлĕ çырла
Пушмак пуçĕ палăрми нумай.
Эпир мар-мĕн, савнăç хăй юрлать
Çырлара чух кунтăк тулнă май.

*Волкова, М. Çырлара : [сăвă] / М. Волкова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. –- [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. –- С. 261.*